Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчен тухать

51 (7368) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июнĕн (çĕртме) 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Хăй тытăмлăх ыйтăвĕсемпе**

## Ю.А. Иванов: “Мускаври тĕл пулусем усăллă иртрĕç”

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа “Раççей Федерацийĕн выранти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен” 131-мĕш номерлĕ федераллă саккун вăя кĕчĕ. Вăл пурнăçа кĕме пуçланăранпа унпа çыхăннă ыйтусем те сахал мар сиксе тухрĕç. Çавăнпа та Раççейри саккун кăларакансем тата выранти хăй тытăмлăх органĕсем хушшинче асăннă саккуна пурнăçа кĕртес ĕçре ĕçлĕ партнерла хутшăнусем кирлех. Шăпах çак тĕллевпе ĕнтĕ Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсем К.И. Косачевпа П.В. Семенов (вĕсем çĕршывăн саккунсем кăларакан органĕн аялти палатинче Чăваш Республикин представителĕсем шутланаççĕ) «Выранти влаç реформи: хирĕçле çыхăну» проекта пурнăçа кĕртме пуçларĕç.

Иртнĕ кĕçнерни кун вара асăннă проекта пурнăçлас тĕллевпе пирĕн республикăри муниципаллă районсен пуçлăхĕсем Мускавра пулчĕç. Вĕсем Патшалăх Думинче, Федераци Канашĕнче тата Раççей Федерацийĕн Президент Администрацийĕнче иртнĕ тĕл пулусене хутшăнчĕç.

Палăртмалла, республикăри выранти влаç представителĕсем ку ыйтупа малтан та пулнă Мускавра. Хальхинче делегацире пирĕн район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле Патăрьел, Комсомольски, Вăрмар, Çĕмĕрле, Красноармейски, Тăвай, Етĕрне районĕсен пуçлăхĕсем пулнă.

Чи малтанах вĕсем Патшалăх Думинче Аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет председателĕпе Г.В. Куликпа тĕл пулнă. Генадий Васильевич район пуçлăхĕсене ял хуçалăхĕ çинчен каларакан федераллă саккун проекчĕпе паллаштарчĕ. Ял хуçалăхне йĕркеллĕ ĕçлеттерес, çак отрасль йĕркеллĕ аталантăр тесе тата мĕн тумалли пирки район пуçлăхĕсен шухăшне ыйтрĕ.

Калаçу кунта “Дача амнистийĕ çинчен” саккун проекчĕ тавра та пулчĕ. Комитет председателĕ асăннă саккун уйрăм хушма хуçалăхсене пырса тивни пирки те каларĕ.

Выранти самоуправлени ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет членĕсемпе Г.Г. Голиковпа, А.И. Салиховпа тата асăннă комитет аппарачĕн ертӳçипе С.Ю. Катуковпа иртнĕ тĕл пулура сăмах выранти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçне йĕркелесси тавра пулчĕ. Мĕн тумалла выранти бюджет йĕркеллĕ ĕçлетĕр тесен? Çак тата ытти хуравсене тупма тăрăшрĕç вĕсем.

Ун хыççăн Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Чăваш Республики Представительствинче РФ Президенчĕ çумĕнчи Чăваш Республикин Представителĕпе Г.С. Федоровпа тĕл пулса калаçрĕç.

Делегаципе йĕркеленĕ тĕл пулусем хыççăн пирĕн район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов халăхсем хушшинчи ыйтусемпе ĕçлекен комитетăн председателĕпе К.И. Косачевпа тĕл пулчĕ. Калаçу, тĕпрен илсен, Муркашри культурăпа сывлăха çирĕплетмелли центра хута ярасси пирки пулчĕ. Константин Иосифович асăннă центра хута ярассинче Муркашсене пулăшма шантарчĕ. П.В. Семеновпа уйрăммăн иртнĕ тĕл пулура депутат Мăн Сĕнтĕрти “Янаш” халăх коллективне Венгрие кайса килме пулăшасси пирки пĕлтерчĕ.

Чăваш Республикинчен кайнă делегаци Кремльте экскурсире те пулчĕ.

Асăннă ĕçлĕ тĕл пулусем пирки хăйĕн шухăшне пĕлтерме ыйтсан, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çапла хуравларĕ:

– Çакăн пек тухса çӳрени питĕ выранлă. Çакă Патшалăх Думин депутачĕсемшĕн те, пирĕншĕн те усăллă. Пĕр-пĕр саккуна йышăниччен унăн проекчĕ пирки выранти хăй тытăмлăх органĕсен представителĕсемпе тĕл пулса калаçни, пирĕн шухăшсене пĕлсе вĕсене саккун хатĕрленĕ чух шута хуни çав тери кирлĕ. Çакă вăл е ку саккуна йышăннă хыççăн кайран улшăнусем кĕртессинчен хăтарать. Çавăн пекех Патшалăх Думин депутачĕсем çак ыйтусемпе хăйсем те выранта тухни, унти шухăша пĕлни питĕ кирлĕ,- терĕ Юрий Александрович.

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене мĕн чухлĕ çулнине кăтартни (процентпа)**

| | |
|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 0 |
| “Волга” | 12 |
| “Восток” | 15 |
| “Герой” | 3 |
| “Агро-Урожай” | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 11 |
| Ильич яч. хис. | 6 |
| “Колос” | 0 |
| Ленин яч. хис. | 9 |
| АФ “Лидер” | 1 |
| “Моргаушская” | 30 |
| “Нива” | 3 |
| “Оринино” | 5 |
| “Передовик” | 1 |
| “Свобода” | 9 |
| “Сеятель” | 0 |
| Суворов яч. хис. | 5 |
| АФ “Рассвет” | 2 |
| АФ “Нива” | 0 |
| “Ударник” | 10 |
| “Хлебороб” | 2 |
| Чапаев яч. хис. | 13 |
| “Чемеево” | 2 |
| Чкалов яч. хис. | 5 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 0 |
| КФХ Ямангеев В.Г. | 0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **5,1** |

**Кăçал июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсем пурĕ 558 гектар çинче нумай çул ӳсекен курăксене çулнă. Çулталăк каялла вара ку хисеп 815 гектарпа танлашнăччĕ. Пĕлтĕр 115 тонна утă янтăланăччĕ пулсан, кăçал “Ударник” хуçалăх çеç 20 тонна типĕтнĕ утă хатĕрленĕ. Йӳçкассисемех 50 тонна сенаж хывнă (районăн иртнĕ çулхи кăтартăвĕ – 866 тонна). Кусемпе пĕрлех “Волга” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 150 тонна силос, “Моргаушская” чăх-чĕп фабрикинче 90 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрленĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç малалла пырать.**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

### Пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳленĕ чухне граждансене социаллă пулăшу памалли хушма мерăсем çинчен

Граждансене патшалăх пулăшăвне парассине вăйлатас, вĕсене паракан социаллă хӳтлĕх шайне ӳстерес тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме паракан субсидисене шутласа кăларма усă куракан, граждансен лару-тăрăвне лайăхлатакан республика стандарчĕсене палăртмалла:

федерацин ĕç тăвакан влаçĕн тивĕçлĕ органĕсене пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн граждансем тӳлекен виçе улшăнăвĕн чи юлашки индексĕсене палăртас енĕпе тĕплĕ сăлтавланă расчетсем тата федераци бюджетĕнчен Чăваш Республикин республика бюджетне паракан укçа-тенкĕ пулăшăвне пайлассине шутлама кирлĕ пуçламăш кăтартусем çумне сĕнӳсем памалла.

2. Выранти хăй тытăмлăх органĕсене организацисем паракан çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсен тарифĕсене муниципаллă пĕрлĕхсенче пурăнакансем илекен социаллă хӳтлĕх шайне сыхласа хăварма кирлине шута илсе палăртма сĕнес.

3. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2006, çĕртме, 9. 48 №.

**Указа ăнлантарни 3-мĕш стр.**

**Раççейре**

## Сывă чухне сипленмелле

РФ ятарлă медицина страховани фончĕ тата РФ социаллă страховани фончĕ ĕçлекен граждансене диспансеризаци тума каякан тăкаксене саплаштарасси çинчен пĕрлехи приказ кăларнă.

“Сывлăх” наци проекчĕ 35-55 çулсенчи ĕçлекен граждансен сывлăхне тĕрĕслеме палăртать. Çакă пĕтĕмпех патшалăх шучĕпе пулать, çынсен тӳлемелле мар.

Сиенлĕ производствăра ĕçлекенсене тĕрĕслеме палăртаççĕ. Тĕрĕслеве вара бюджетниксенчен пуçлаççĕ.

Мĕншĕн 35-55 çулсене илнĕ-ха? Çакă вăй питти вăхăт шутланать. Чирсем те çак тапхăрта палăрма пуçлаççĕ.

Çак çулсенчисем пирĕн çĕршывра 14 миллион çын. Кăçал 4 миллионне пăхасшăн. Хăйсен сывлăхне тĕрĕслеттерес текенсене кĕтеççĕ.

Çитес çулта диспансеризаци ирттерме патшалăх укçа-тенкĕне кăçалхинчен икĕ хут ытларах – 4 миллиард тенке яхăн уйăрать.

**Ĕçре палăрнăшăн**

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн июнĕн 15-мĕшĕнчи 163№ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе çаксене наградăланă:

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:

**Нина Николаевна АЛЕКСАНДРОВАНА**, Муркашри тĕп больницăн тĕп бухгалтерне;

**Надежда Николаевна БОЧКАРЕВАНА**, Муркашри 2№ райбольницăн аслă медицина сестрине;

**Нина Петровна ЕРШОВАНА**, Юнкăри ялти врач амбулаторийĕн акушерне;

**Галина Николаевна КУЗНЕЦОВАНА**, Муркашри тĕп больницăн анестезиологипе реаниматологи врачне;

Нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн **Людмила Валентиновна МОРЕВАНА**, “Сундырь-Хлеб” ООО тĕп бухгалтерне.

**Республикăра**

## Чăваш Ен Республика кунне уявлать




Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче Регионсен хушшинчи “Регионсем – вĕçĕмсĕр хутшăнса ĕçлени” курав уçăлать. Экономика аталанăвĕпе сутуилӳ министрĕ Иван Моторин пĕлтернĕ тăрăх, курава хутшăнма Раççейĕн 19 регионĕнчен 293 заявка килнĕ, çавăн пекех Беларуçпе Италирен те пур. Курава республикăри 220 предприятипе организаци хутшăнĕ. Тĕп экспозицие Чăваш Енре нацин приоритетлă проекчĕсене пурнăçа кĕртессине халалланă. Промышленноçпа энергетика министерствин “Пулма пултарайман чăнлăх” уйрăм экспозицине те вырнаçтарĕç.

Июнĕн 22-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкар – “Химпром” АУО – Тутаркасси автоçула уçаççĕ. Çĕнетнĕ трассăна уçнине массăллă велочупупа паллă тăвĕç. Çак кунах Шупашкар заливĕн çывăхĕнче фонтан уçаççĕ. Шупашкар юхан шыв порчĕн иккĕмĕш черетне хута яраççĕ.

Шупашкар хулинче тĕрлĕ мероприятисем йышлă. “Раççей çăл куçĕсем” фестиваль, ал ĕç ăстисен выставкисем, тĕрлĕ ăмăртусем, концертсем...

Кăçалхи çул уяв мероприятийĕсен йышĕнче çĕнĕлĕхсем те пулĕç. Атăлта çемьесем ишсе тупăшĕç. Залив çывăхĕнче кустăрмаллă конькипе чупса ăмăртĕç. Карас çыхăнăвĕпе тивĕçтерекен пĕр компани хула çийĕн дирижабльпе вĕçме сĕннĕ.

Республика кунне кăçал Улатăрпа Сĕнтĕрвăрри районĕсенче те анлăн паллă тăваççĕ.

Пирĕн районти ял тăрăхĕсенче художество пултарулăх коллективĕсен концерчĕсем, тĕрлĕ вăйă-конкурссем пулаççĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче Муркашри ачапăча паркĕнче кану каçĕ йĕркелеççĕ.

**Кĕскен**

### Ял хуçалăхне – тата 500 млн. тенкĕ

**Иртнĕ эрнере Дмитрий Медведев вице-премьер наци проекчĕ шучĕпе ял хуçалăхне аталантарма тата 500 миллион тенкĕ уйăрма сĕннĕ.**

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин çак шухăша ырланă.**

**Йыхрав**

### Çамрăксен кунĕ ячĕпе

Çитес эрне кун Лантăш вăрманĕн уçланкинче районти çамрăксен фестивалĕ иртет. Командăра 14-30 çулсенчи 10-12 çамрăк пулмалла.

Çамрăксем тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсенче вăй виçеççĕ. Юрлас-ташлассипе пултарулăх конкурсĕ пулать. Тутлă апат-çимĕç пĕçерессипе те ăмăртаççĕ.

Уяв 10 сехетре пуçланать. Питĕ хаваслă пулать. Пурне те уява чĕнеççĕ.

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă, юратнă мăшăра, аннене, кукамая - Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Ивановна ИВАНОВАНА** 45 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр.

Чуманкасси библиотекинче 25 çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе сăпайлăхупа, хастарлăхупа палăртăн.

Çемьере яланах килĕшӳ, тулăх пурнăç пултăр. Утас кун-çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр.

**Салампа: 3 хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕ, тăхлачисем, тăванĕсем, амăшĕ.**

---



Пирĕн юратнă анне, асанне, кукамай **Анфиса Гавриловна ЖИРНОВА** Пиккикасси ялĕнче пурăнать. Çак кунсенче вăл 80 çул тултарать. Юбилей ячĕпе эпир ăна чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Юратнă аннеçĕм, ан чирле, татах та нумай пурăн. Эпир сана чун-чĕререн хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, кинĕ, мăнукĕсем, прамăнукĕсем.**

**Пăрлă çумăр**

## Сиен кӳмесĕр иртмерĕ

**Иртнĕ эрне кун республикăра шалкăм çумăрпа хутăш пăрлă çумăр çурĕ. Шел пулин те, пирĕн района та сиен кӳмесĕр иртмерĕ вăл. Акă мĕн каласа пачĕ кун пирки район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай ертӳçи Н.П. МИЛЮТИН:**

Июнĕн 16-мĕшĕнче 16 сехет те 30 минутпа 17 сехет те 10 минут хушшинче кӳршĕллĕ Мари Эл Республикипе чикĕллĕ “Рассвет”, “Хлебороб” хуçалăхсенче, çак тăрăхсенче вырнаçнă ялсенче шалкăм çумăрпа хутăш пăр çурĕ. Çак çут çанталăк инкекĕ “Хлебороб” АФ чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа Мăн Сĕнтĕр тата Ильинка ял тăрăхĕсенчи уйрăм хушма хуçалăхсенчи хуралтăсемпе пахча çимĕç культурисене сиен кӳчĕ.

Уйрăммăн илес пулсассăн, “Хлебороб” АФ чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 12 гектар çинчи выльăх кăшманĕ, 2 гектар çинчи хĕрлĕ кăшман, 3 гектар çинчи купăстапа сухан сиенленнĕ, сысна ферминче 14,5 тăваткал метр чухлĕ чӳрече кантăкĕ ваннă.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Куçкăнта вара уйрăм çынсен 15 хуçалăхĕнче 4-5 га çинчи пахча çимĕç пăра пула сиенленнĕ. Çавăн пекех пурăнмалли çуртсемпе хуралтăсен чӳречисен кантăкĕ ваннă, И.В. Яртеев хуçалăхĕнче 180 тăваткал метр руберoид сиенленнĕ, Г.Г. Кудряшова хуçалăхĕнче 8 тăв. метр сарай тăрри хăйпăннă, хапха тӳнсе кайнă, А.Д. Бычкова хуçалăхĕнче кирпĕчрен купаланă хапха юпи анса ӳкнипе хапха тӳнсе кайнă тата В.П. Вахрушев хуçалăхĕнче пурăнмалли çурт çумне çыпăçтарнă пластик плитасем 25 тăваткал метр сиенленнĕ.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче вара хăш-пĕр хушма хуçалăхра пахча çимĕç культурисем пĕтнĕ: 246 хуçалăхра пĕтĕмпе 12,6 гектар çинче. Çав шутран 5,2 гектар çинче – купăста, 2,5 гектар çинче – помидор, 1,3 гектар çинче – сухан, 0,8 гектар çинче – хăяр, 2,8 гектар çинче – ытти культурăсем. 52 гектар çинче çĕр улми те вырăн-вырăнпа сиенленнĕ. Ку ял тăрăхĕнче те çил-тăвăл кантăк ватнă тĕслĕхсем пур.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**Çырăнтару – 2006**

**Райхаçатăн çырăнтару хакĕ ку хутĕнче те ӳсмест**

**Хаклă вулакансем! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпа – 135 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**